**Анатолий Юман**

# Ватлăхпа тĕл пулни

**Сăвăсем**

**Ульяновск-2012**

ББК

Ю 41

Юман А.
Ю 41 **Ватлăхпа тĕл пулни.** Сăвăсем. – Ульяновск, 2012 - 20 стр.

Кĕнекене Анатолий Юманăн тĕрлĕ çулта çырнă сăввисем кĕнĕ.

© А.Юман, 2012
© Составление и оформление
В.А.Ефимова (г. Ульяновск), 2012

# Автор ҫинчен

Анатолий Юман (Анатолий Фёдорович Ермилов) Чӑвашкасси ялӗнче (Ульяновск облаҫӗнчи Чӑнлӑ районӗ) 1931 ҫулхи сентябрӗн 12-мӗшӗнче ҫуралнӑ. Кивӗ Улхашри ҫичӗ ҫуллӑ, Вӑта Тимӗрҫенти вӑтам шкулсенче вӗреннӗ.

1952 ҫултанпа районта тухса тӑнӑ хаҫатра ӗҫленӗ.

1962 ҫулта Хусанти ВПШ ҫумӗнчи журналистсен ултӑ уйӑхлӑ курсӗнчен вӗренсе тухнӑ. Вӑл Ульяновскра тӑван чӗлхепе тухса тӑракан «Канаш» хаҫата йӗркелесе яракансенчен пӗри. Хаҫатра ӗҫленӗ ҫулсенче обществӑлла ӗҫе активлӑ хутшӑннӑ.

1983 ҫулта Чӑвашкассинчи пуҫламӑш шкул директорӗпе пӗрле Раҫҫейре малтанхи хут И.Я.Яковлев кунне йӗркелесе янӑ. 1992 ҫулта ҫак юхӑм Чӑваш чӗлхи кунӗ статусне илнӗ. А Юман ҫаплах Ульяновск облаҫӗнче чӑвашлӑх юхӑмне йӗркелесе яраканӗсенчен пӗри.

А.Юман хӗрӗх ытла кӗнеке авторӗ. Унӑн малтанхи сӑвви районта тухса тӑнӑ «Пӗрлешӳллӗ ӗҫ» хаҫатра 1947 ҫулта пичетленнӗ. Вӑл 1983 ҫултанпа СССР тата РФ писателӗсен союзӗсен членӗ, Раҫҫей культура тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ. Петӗр Хусанкай тата Николай Абрамов ячӗллӗ литература премийӗсен тата Ульяновск облаҫӗнчи журналистсен Мария Ульянова ячӗллӗ примийӗн лауреачӗ.

## ТАВРĂННИ

«Хамăн халăха эп кирлĕ пулăп
Паян мар пулсассăн та, ыран», -
Тенĕ çамрăк, пирĕн пулас Улăп,
Уйрăлса ача чух Кушкăран.

Хăйĕн Олимпне тупма пултарнă
Яковлев, чăнах та, Чĕмпĕрте.
Ку – Чăваш тĕнчин кĕтречĕ мар-и
Пулнă çав синкерлĕ ĕмĕрте.

Çĕр çинчи кун-çулĕ унăн сумлă,
Тунсăхлăн вĕçленнĕ Мускавра.
Халь каллех тусĕпеле вăл çумлă
Атăл çинчи ватă хулара.

Çав куна тахçанах эпир кĕтнĕ,
Акă çитрĕ çав йăлттам самант.
Кам калать пирте пуласлăх пĕтнĕ?
Чĕрӳне, чăваш, тек ан амант.

Тинкерет мала ят-сумлă ватă
Пирĕнпе пĕрле çаплах хастар.
Умĕнче – каллех çиçет çут Атăл
Кур: Чăваш тĕнчи те юнашар.

04.10.2006.

## ТĂВАН ЧĔЛХЕ

Тăван чĕлхе! Эс – манăн чун саманчĕ.
Эс пур чухне – эп катăк мар çынран.
Ахальтен мар чĕре вутпа çунатчĕ
Ютра çӳренĕ майăн ăнсăртран.

Чăваш чĕлхи! Сана юп курнă, шаннă,
Куç пек упранă халăх авалтан.
Кун-çул вучахĕнче эс кăварланнă,-
Чĕлхе вĕçне килетĕн чи малтан.

Эс – халăхăн асапĕпе илемĕ,
Ун савнăçĕ, хевти, хуйхи-суйхи.

Эс пур чухне чăваш юта кĕленмĕ,
Санпа пĕрле чух кăмăлĕ çурхи.

Тăван чĕлхе! Эп сансăр — мĕскĕн, тăлăх,
Эс пур чухне — ман кăкăрта кăвар.
Эс пур чухне çеç вилĕмсĕр ман халăх,
Ун чух ун çут пуласлăхĕ çук мар.

17.01.2001.

## МАНĂН ПУРНĂÇ

Аттеçĕм пулнă ман Юман,-
Паллах, ку ăнсăртран пулман.

Асаттепе ыр асанне
Чунтан юратнă ывăлне.

Юман пек, пурăнтăр пин çул,
Тесе çапла ят хунă пуль.

Анчах шутланă пек пулман,-
Ир хăрнă ман атте-юман.

Пач пулса тухнă урăхла -
Кĕç шĕкĕ çинĕ хурахла.

Кăра çил хуçнă силлесе,
Ăна тăман вăл шеллесе.

Аттеçĕм хăрнă кăлăхах,-
Пире хăварнă тăлăха.

Шăллăмпала мана анне
Пĕччен кăларнă çул çине.

Ай-хай тумхахлăччĕ çав çул,
Суратчĕ чун, ыратчĕ хул.

Мана, айван юманккана,
Тӳсме тивмерĕ мĕн кăна!

Анне те кĕчĕ час çĕре,
Эпир ача чухнех, эре.

Çапах пурте начар пулман,
Ыйткалама тухса кайман.

Совет Союзĕ пулчĕ кил,
Пире ӳстерчĕ, пачĕ пил.

Сапла шăллăмпала мана
Çынна кăларчĕ. Тав ăна!

Тĕл пулчĕ Петĕр Хусанкай,
- Мĕтри Юман пек ӳссе кай,-

Тесе пиллерĕ вăл мана,
Поэзири çĕн Юмана.

Атте пек пăхрĕ ман çине,
Эп туйрăм классик ăшшине.

Ӳсес чухне, кĕтмен çĕртен,
Кĕç ӳкрĕм Çĕр çине çӳлтен.

Хуран капланчĕ, пĕлĕт пек,
Шуратрĕ яш пуçа элек.

Тĕп чăваш ячĕ — Юман ят
Пуç çине ячĕ хăямат.

Тĕл пулчĕ ман тĕле те мур,
Пĕр шĕкĕ, вăл кăтартрĕ хур.

Эп пултăм хуçăлнă турат -
Çав мур юри ура хурать.

Çавăнпала ăнмарĕ ĕç,
Хĕрсех лараттăм пуль кĕç-вĕç
Ыр çын тĕлне пулман пулсан...
Çапла вăл пурнăç, ăнмасан.

Çапах шанатпăр-ха ырра,
Тӳссен те хурапа шурра.

Этем хĕрет кĕрешӳре,-
Ансат аваймĕç-ха пире.

Çак шанчăк вăй парать мана,
Поэзири çĕн Юмана.

Çĕнни те ĕмĕр çĕнĕ мар,-
Куратăр, тек эп хунав мар.

Тен, çитрĕм пулĕ кивелсе,
Юррăмсене кĕвĕлесе?

Ларасчĕ-ха тĕрĕс-тĕкел,
Тăкесчĕ кĕр енне йĕкел.

Юлашкинчен çакна калар:
Ĕç манăн кивĕ ятра мар.

Ешертĕр пиншер çул вăрман,
Чăваш юманлăхĕ ялан.

Чăваш Юманĕ – сумлă ят,
Унра пур шанчăклă хăват.

Вăл пур чухне – чăваш ыр-сыв,
Кал-кал сывлать Тăван çĕршыв.

Ман халăх çирĕп пултăрах
Юман пек, пурăнтăр вăрах.

Анчах шăпа вăл тĕрлĕрен,-
Пуласчĕ сыхă шĕкĕкрен.

19.07.2007.

## ПОЭТ КУН-ÇУЛĔ

***Валентина Ефимована***

Çуралать Поэт. Килсессĕн Çĕр çине
Тур парать ăна хут-ручка аллине.

Хăй тĕллĕн ӳсет кайран Поэт куллен,
Йывăрпа ӳсет яш чух вăл, пит хуллен.

Чĕри витĕр кăларать йăлт курнине,
Хут çине тĕрлет мĕн пулнă-иртнине.

Ашшĕ-амăшĕ мар, критикĕ хĕнет,
Хуллипе пĕр шеллемесĕр ислетет.

Ӳстерет ăна çапла хĕне-хĕне,
Леш шăлне çыртса çаплах тӳсет хĕне.

Сăвă-юрă çуралать куллен çапла.
Пухăнать тин ячĕ-сумĕ ватталла.

Ăна кирлĕ ватлăхра та ăш сăмах,
Çакна курнă-тӳснĕ эпĕ те хамах.

Унсăрăн тухма пултарĕ манăçа,
Поэта памасть çак шухăш канăçа.

Питĕ кирлĕ вулаканĕ çырнине,
Вăл кĕрсе вырнаçтăр унăн чĕрине.

Тепĕр хут çапла килет çын тĕнчене,
Тĕнчере те тĕрлĕрен-мĕн кĕнчеле.

Эс мана çапла çуратрăн çĕнĕрен,
Тав тăватăп сана уншăн чĕререн.

17.04.11.

***

Мана анне пĕччен пăхса ӳстерчĕ,
Пире пусса тăратчĕ самана.
Çук мар пулсассăн та асапĕ-терчĕ,
Пиллерĕ ыррине те вăлл мана.

Ырри, тен, ытларах та пулнă пулĕ,
Анчах хакла пĕлмен-и, тен, ăна.
Епле пулсассăн та, ăс-хакăл мулĕ
Памастчĕ канăç манăн яш чуна.

Чĕнетчĕ, илĕртетчĕ вăл асамлăн,
Сенкер тӳпе пек уçă, тап-таса.
Çӳреттĕм эп siксе — епле ăмсанмăн -
Путек пек, çереме çеç таптаса.

Çапах хама çич тӳпере туяттăм,
Шеллеттĕм çич ютри тантăшсене.

Эп телее еткерлĕхре туянтăм,
Мул хуçисем хĕсеççĕ вĕсене.

Çӳç шуралсан тӳпемĕр тĕксĕмленчĕ,
Халь мăнуксен шăпи шутлаттарать.
Ăçта вăл эпĕ туйнă-курнă ĕнчĕ?
Ма упрамарĕ, аякка тарать?

1966 ç., кăрлач.

***

Тытса ăсталама чун хушнине
Ялан ман «вăхăт çукчĕ»ш чухне.

Ăна илетчĕ леш-хайхи хĕсмет,
Ун тыткинче çын ватлăха сисмест.

Чи кирлине çак хăварать кая,
Каю шăтсассăн пач килмест мая.

Манпа та пулса тухрĕ çакнашкал,
Мал туйăнатчĕ вĕçсĕр те кал-кал.

Ак, çитĕ ватлăх, тухăп пенсие,
Эп пулăп тутă, питĕрĕп çие.

Çыру сĕтелĕ хушшине ларса
Эп сăвă-юрă ларăп хайласа.

Кун курĕç çырнисем те ун чухне,-
Ма кӳренес паян этем йăхне?..

Хайхи-майхи сасартăк çитрĕ те:
Лара парать... ман ватлăх тĕпелте!

Кур: ахăрсамана унпа пĕрле,
Вăл ӳсĕр хăна евĕр çĕмĕрлет.

Ăçта унта реххетленсе ларма?
Каять тар кăларни те харама.

Чи чухăнни те, чи мĕскĕнни те эс,-
Ĕç-пуç пирки пач калаçас килмест.

Çынна çын – кашкăр, çын – укçа чури,-
Такам çак варалать чысне юри.

Чăн туслăх арканать, юхать чĕр юн...
Сӳ-сӳ тăвать кун пек чух ватă чун.

Каллех тарать алран телей тилли,
Умра пач курăнмасть тĕлли-паллаи.

1996 ç., кăрлач.

## МĂШĂРĂМА

Çĕр çинче сахал-и хĕр-хĕрарăм?
Йĕпкĕн хурисем те саррисем...
Пĕринчен тепри хитререх мар-и -
Чечекпе çырла тĕс илнисем.

Хитрисем нумай. Анчах та арăм
Кирлĕ пĕрре çех кун кунлама.
Тикĕс мар этем кун-çулĕ, вăрăм,-
Сăмахпа çеç çăмăл калама.

Хурапа шурра санпа кам пайлĕ?
Кам ăнланĕ йывăр чух сана?
Арăм пултăр ырă та сăпайлă,
Инкекре ал патăр вăл кăна.

Эп сана шырарăм каçăн-ирĕн
Çамрăк чух чечеклĕ улăхра.
Пурнăç çулĕ йывăр килчĕ пирĕн,
Халĕ те иртмест вăл ырлăхра.

Пултăн манăн шанчăкăм-тĕрекĕм,
Чунупа та сăнупа хитре.
Эп – тĕпри юман, эс – ман тирекĕм,
Кăра çил вĕрсен те хӳтлĕхре.

Тав, çапла пулма пĕлнишĕн, арăм!
Эсĕ манăн чи варли – пĕрре.
Санăн умăнта ман пысăк парăм,
Пирĕн туслăх пытăр ĕмĕре.

1994 ç.

## ЧĂН ТУСЛĂХА УПРĂР, ÇЫНСЕМ!

Туссем яш чухне тупăнаççĕ.
Анчах кăмпа мар-çке вăл, тус.
Çулсем ăнсăртран тĕл пулаççĕ, -
Тус пур чух пуçна эс ан ус!

Пĕри – ачаран пĕрле ӳснĕ,
Иленнĕ тепри – аякран.
Чунпа-чĕрипе тусне сиснĕ,
Çывхарнă, юлман вăл санран.

«Çĕр сум вырăнне çĕр тус пултăр»,-
Тесе ахальтен каламан.
Тусу инкекрен сана çăлтăр,
Райра чух пĕр пуç аптраман.

Кĕр çитрĕ те, çулçă саларчĕ,
Сисетĕп: сайралчĕç туссем.
Ансат-и кун-çулăмăр терчĕ,-
Умра – палламан сăн-питсем.

Чăн тус пулайсан та яланлăх,
Çулсем кашласа иртнĕçем,
Туссем хушăнмаççĕ. Ку – чăнлăх,
Чăн туслăха упрăр, çынсем!

1995, юпа.

## ЭП – УРĂХ!

*Нет, я не Байрон, я другой...*
(М.Лермонтов)

Сонет кăна çыратăн, теççĕ
Мана хăш-пĕр ĕçчешĕмсем.
Вĕсем урăххине кĕтеççĕ,-
Пур манăн çĕнĕ сăвăсем.

Анчах вĕсем пулса тухаççĕ,
Хам пекех, хитре мар, салху.

Ман çулсене çитсессĕн эсĕ
Хавассăн çырса пăх-ха ху.

Çапах усалпала ан асăн,-
Çунатлă сăвă та пур ман.
Ăшра ыр туйăм каплансассăн
Ăна-кăна сахал çырман.

Сăвăласа роман хайларăм
Вăхăтĕнче, ахаль ларман.
Эп çамрăкчĕ, ман пурччĕ арăм,
Ик хĕр, ик ывăл ӳсрĕç ман.

Ку енĕпе – куратăр хăвăр -
Эп генирен пĕртте юлман.*
Çырса чапа тухмашкăн йывăр.
Эп урăх. Иккĕмĕш Юман.

Çапла, эп савăнса мухтарăм
Юратăва сонетсенче.
Çапах та, темшĕн, пур пек парăм,
Чăн юрату вăл – хăй тĕнче.

Хутран-ситрен çапах илтетĕп
Вĕсем пирки эп ăш сăмах.
Паллах, кăшт вăрттăн хĕпĕртетĕп:
«Чăнах та çыртăм-ши хамах?!»

Пĕри каларĕ куç кĕретĕн:
«Сонет вуланă-ха самай.
Çапах мана эс тĕлĕнтертĕн,-
Шекспир хăй çырнă пек, кай-кай!..»

Вăл критик мар. Ку – хĕр сăмахĕ,
Çавăнпала, тен, хаклăрах.
Ăна илтсессĕн эп, ухмах пек,
Çӳрерĕм савăнса вăрах.

---

* А.С.Пушкин хăй хыççăн манашкал тăватă ача – икĕ ывăл, икĕ хĕр хăварнă. (Автор асăрхаттарни).

Ĕҫчешĕмсем ҫеҫ шарламаҫҫĕ,
Ҫӳреҫҫĕ илтмĕше хурса.
Вĕсем мĕн пуррине курмаҫҫĕ,
Ҫапмаҫҫĕ пичетре ҫырса.

Сăввăмсенче халь – урăх шухăш,
Халь урăх кĕвĕ юррăмра.
Пĕчченҫĕ пурнăҫ хумĕ шухă,
Телей, мираж пек, катара.

27.11.2009 ҫ.

***

Ҫемҫе мамăклă, шап-шурă
Ҫын пулман-ха тĕнчере.
Ун пекки пулсан та – Турă,
Тен, пĕччен кăна, эре.

Ҫавăнпа пур ҫылăхсемшĕн
Теприне айăпличчен,
Ху ҫине пăхса илсессĕн
Лайăх пулĕччĕ-и, тен?

Ĕнтĕ ку та – кивĕ Чăнлăх,
Ун ҫинчен халь, ватăлсан,
Тин пĕлейрĕм, хамăн ҫылăх
Лĕкĕ евĕр пухăнсан.

18.03.2011 ҫ.
Шупашкар.

***

Усалли те пур, ырри те -
Икĕ енлĕ, ик талант.
Ыр талант кӳрет ыр витĕм,
Усалли пач пăталать.

Ҫакна хам тӳссе эп куртăм,
Христос Турă тӳснĕ пек.

Усалли килет вăр курттăм,
Ырри ваккăн, пĕрчĕпе.

13.03.2011 ç.

## ТУНСĂХ

Мĕн чул ял пĕлеттĕм эпĕ
Пирĕн пĕчĕкçĕ ялта.
Пурнăç тăррипеле тĕпĕ
Куç умне тухать йăлтах.

Урампа утса пыратăп -
Пурте пĕлĕш е тăван.
Кивĕ çурт е кив хуралтă
Таранччен йăлт астăван.

Пĕрисен кил-çурчĕ пысăк,
Алăк каснă çĕнĕлле.
Теприсен, ват çын пек, усăк,
Çĕре путнă темелле.

Хуçисем те ĕнтĕ тĕрлĕ:
Аслисен утти йăваш.
Яшшисем сăнран хĕп-хĕрлĕ -
Çĕнĕ ĕмĕрти чăваш.

Чи ватти халь – манăн тантăш,
Çук пиртен аслăраххи.
Асăма килет çеç тăтăш
Иртсе кайнă авалхи.

Мĕн чул ят унта ăсаннă,
Мĕн чул хĕр, мĕн чухлĕ ар!
Куç умне тухать асамлăн
Яшлăхри кашни сăнар.

Тек ăна-кăна кураймăн
Таврăнсан тăван яла.
Чун-чĕре хускалчĕ манăн,-
Тунсăх тăтăш манпала.

20.12.2010 ç.

## ТĂВАН ЯЛА АСА ИЛНИ

Тăван ял, Чăвашкасси,
Эс асра, мĕн каласси!
«Чăвашкассинчен уйрăлсассăн
Паллă нуша курасси»,

Юр юрлаччĕçĕ ара
Хĕрсем кĕрхи сăрара.
Хам та çакна пĕлнĕ лайăх,
Юрри халь те асăмра.

Çитрĕ çĕнĕ самана,
Тухса кайрăм салана.
Уйăрчĕ пире сасартăк.
Кам шутланă ялана?

Пĕрмай тĕнче касрăмăр,
Хухса ларчĕ сассăмăр.
Халăхпа пĕрле сахал-и
Нушапа терт куртăмăр.

Эс каймарăн асăмран,
Тымарсем татăлманран.
Хутран-ситрен тĕл пулсассăн
Ыратать чĕреçĕм ман.

Шел питех те яшлăха,
Тертре йăшнă халăха.
Тантăшсем сайралнă йышлăн,
Кил-йыш юлнă тăлăха.

Илтёнмест ача сасси.
Ăçта пирĕн пуласси?
Ĕненес килмест пĕрте те,-
Ватăлать Чăвашкасси.

Эс çапах та пурăнан,
Урăх юрă янратан.
Юрлаканĕсем камсем-ши?
Калаймастăп эп ятран.

25.03.2012 ç.

## ЭЛЕГИ

Яш чух клубра тĕл пулаканччĕ
Тантăшсемпе е урамра.
Питех те час хĕвелĕм анчĕ,-
Ку чух вăл çук, ку çук çумра.

Унччен каç пулттипе çӳренĕ
Унта, тĕл пулнă ташăра.
Паллах, концертсене иленнĕ,
Юрланă хам та хушăран.

Яш-кĕрĕм халĕ те хаваслă,
Клуб алăкĕ пач хупăнман.
Анчах, тӳррипеле калас-тăк,
Унта каяс килмест тек ман.

Янрать халь урăх юрă-ташă,
Юрлаканни те эпĕ мар.
Каç-каç ялта урам та пушă,
Çунмасть тек кăкăрта кăвар.

Чылай тус аякка ăсаннă
Яланлăхах тăван ялтан.
Кайран, тен, ял тĕлне те маннă,-
Сайра автать ялта автан.

Тантăшсемпе халь тĕл пулатпăр
Автансăр, тĕтĕмсĕр ялта.
Мĕн тăвăн, пĕчĕкçĕн каятăп,
Пире тĕп кил кĕтет унта.

Çапах çӳретĕп ырă-сывă,
Анчах та шухăшăм типет.
Çыраттăмччĕ хаваслă сăвă,
Халь реквием çырма тивет.

Е çырăнать тата элеги,-
Сăввăмсене халь кам вулать?
Ан тиркĕр, халĕ е ĕлĕк-и,-
Кун пекки пулнă вăл, пулать.

27.11.2009 ç.

***

Тĕлĕкре эп – кăйкăр, ирĕк çын, хуçа:
Темĕн те кĕрет-çке манăн ват пуçа.

Ман çунатăм çăмăл, çичĕ тӳпере.
Кайăк евĕр вĕçрĕм кĕçĕр те, эре.

Кĕç çĕре ансассăн куртăм эп сана,
Хӳхĕм питлĕ-куçлă, ватăлман сăнна.

Шел, Çаплах пулмарĕ каласа сăмах,
Вăрансассăн выртăм кулянса вăрах.

1996 ç., кăрлач.

***

*М.У.*

Эпир санпа пыратпăр алла-аллăн
Çурхи хитре хула урамĕпе.

Утатпăр васкамасăр. Чунĕ камăн
Çĕкленмĕ санпа çумлăн утнипе?

Пĕр-пĕрипе мĕн чухлĕ пулнă уйрăм,
Мĕн чухлĕ çуннă саншăн аякра?
Паян тинех хама телейлĕ туйрăм,
Шуралнă ватă çын  çак самантра.

Сана варти сăмахсене каласшăн,
Тин çеç  пĕрлешнĕ çамрăк мăшăрла.
Пĕрне-пĕри пăхса илетпĕр ăшшăн,
Чунтан-вартан савса тăр-кăнтăрла.

Эп çак самантăн чăн хакне пĕлетĕп,
Ăна танлаштараймăн сумпала.
Шăпа каллех умри çула пӳлсен те,
Ялан эп пулса юлăп санпала.

Çав самантра чуна епле аванччĕ,
Куçпа эп ыталанăччĕ сана.
Çавăнпала çак тĕлпулу саманчĕ
Кĕтрет пек пулса юлчĕ ялана.

30.05.2004 ç.

## ХĔЛ  УМĔН

Чӳк уйăхĕн варри. Кĕрхи кун ăмăр.
Календарьпе хĕл лармалла. Анчах
Çаплах çăвать йĕпхӳ пек вĕтĕ çумăр,
Малтанхи юр халь ирĕлчĕ пачах.

Кичем пуссассăн ăшă пӳрте кĕтĕм,
Тухас килмест пĕрре те урама.
Пӳртре тăр-кăнтăр тĕлĕнче те тĕттĕм,
Çутатăп çутă вулама-çырма.

«Çанталăк та, çынсем те урăхланчĕç»,-
Тесе  ӳпкелешетпĕр ваттисем.

Çапах чĕресенче сӳнмест-ха шанчăк,
Кĕтетпĕр ырă вăхăт çитессе.

Пĕрмай шăвать-ха Вăхăт чарăнмасăр,
Вăл шунă майăн Пурнăç улшăнать.
Чечекленеймĕ Пурнăç вăл шумасăр,-
Кĕç килсе çитĕ пирĕн Хĕл-хăна.

27.11.2009 ç.

## ÇĔНĔ ĂРĂВА

Çĕн ăру, çĕн ăру!
Эпĕ – санăн чуру.
Çитмесен – çитерсем,
Ытлашши – каçарсем.
Ан пĕтер хӳтерсе
Йăнăшсем тĕл пулсан.

Çĕн ăру, çĕн ăру!
Манăран çук чару:
Ĕмĕтлен, чечеклен,
Çунат сар та çĕклен,
Пул хастар, пул малта,
Пултарсамччĕ йăлтах!
Пул маттур эс пиртен –
Ку йĕрки – ĕлĕкрен.

Çĕн ăру, çăн ăру!
Кĕр-кĕрлетĕр юрру!
Эс чăваш пулса юл,-
Çакă пулĕ ман мул.
Эп кĕтетĕп сана,
Улăштар эс мана.
Эсĕ кил, эсĕ кил!
Манăран сална пил!

1996 ç., пуш, 10.

## Кĕнекере пурри

Автор çинчен ....................................................................................3
Таврăнни ............................................................................................4
Тăван чĕлхе .......................................................................................4
Манăн пурнăç ....................................................................................5
Поэт кун-çулĕ ....................................................................................7
«Мана анне пĕччен пăхса ӳстерчĕ...» ..............................................8
«Тытса ăсталама чун хушнине...» ....................................................9
Мăшăрăма ........................................................................................10
Чăн туслăха упрăр, çынсем! ............................................................11
Эп – урăх! .........................................................................................11
«Çемçе мамăклă, шап-шурă...» ........................................................13
«Усалли те пур, ырри те...» .............................................................13
Тунсăх ..............................................................................................14
Тăван яла аса илни ..........................................................................15
Элеги ................................................................................................16
«Тĕлĕкре эп – кăйкăр...» .................................................................17
«Эпир санпа пыратпăр алла-аллăн...» ...........................................17
Хĕл умĕн ..........................................................................................18
Çĕнĕ ăрăва ........................................................................................19

Анатолий ЕРМИЛОВ-ЮМАН

**Ватлăхпа тĕл пулни**

**Встреча со старостью**

На чувашском языке

В авторской редакции

Подписано в печать. Формат 60х84$^{1/16}$. Бумага офсетная.
Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Тираж 100.
Отпечатано с готовых диапозитивов заказчика.